27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ИЮЛЬ
4
ЫТЛАРИКУН
131(6626) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ЧЕРНЯХОВСКИЕ
Совет Союзĕн Маршалне РОКОССОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, МИНСКРАН çурçĕр-хĕвеланăçнерехре танковăй соединенисемпе пехота çав тери хăвăрт наступлени туса пынипе, Белоруссин область центрне ВИЛЕЙКА хулине тата КРАСНОЕ хулипе паха чугун çул станцине туртса илнĕ. Çапла пирĕн çарсем нимĕçсен МИНСК хулинчен ВИЛЬНО хулине тата ЛИДА хулине каймалли çул-йĕрĕсене татнă.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах МИНСКРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехре БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем утлă çарпа танковăй соединенисем тата пехота çав тери хăвăрт пырса çапнипе, СТОЛБЦЫ, ГОРОДЕЯ тата НЕСВИЖ ятлă хуласемпе паха çул-йĕрсен узелĕсене туртса илнĕ, çапла пирĕн çарсем нимĕçсен МИНСКРАН БРЕСТ хулине тата ЛУНИНЕЦ хулине каймалли çулйĕрĕсене татнă.

Çакă питех те хăвăрт туса ирттернĕ маневрта тата ВИЛЕЙКА, КРАСНОЕ, СТОЛБЦЫ, ГОРОДЕЯ, НЕСВИЖ хулисемшĕн пынă çапăçусенче танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ОБУХОВĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн АСЛАНОВĂН, РОДИОНОВ полковникăн, КРЕМЕР полковникăн, СОКОЛОВ подполковникăн, ТУРЧИН майорăн танкисчĕсем; ПЛИЕВ генерал-лейтенантăн, ТУТАРИНОВ генерал-майорăн, ГОЛОВСКИЙ генерал-майорăн, ПОПРИКАЙЛО полковникăн Кубань казакĕсен утлă çар соединенийĕсем; КРЫЛОВ генерал-лейтенантăн, ЛУЧИНСКИЙ генерал-лейтенантăн, БАТОВ генерал-полковникăн, ГАЛИЦКИЙ генерал-полковникăн, ПЕРХОРОВИЧ генерал-майорăн, ШВАРЕВ генерал-майорăн çарĕсем; НАРХОДЖАЕВ подполковникăн, ВАХРОМЕЕВ полковникăн, СОЛОМОННИКОВ майорăн, ПОДОПРИГОРА майорăн, ЯКОВЛЕВ капитанăн, ИБРАГИМОВ капитанăн артиллерисчĕсем тата авиаци генерал-полковникĕн ХРЮКИНĂН, авиаци генерал-полковникĕн РУДЕНКĂН летчикĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве ячанлăха палăртса хăварас тесе, ВИЛЕЙКА, КРАСНОЕ, СТОЛБЦЫ, ГОРОДЕЯ тата НЕСВИЖ хулисене туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июлĕн 2-мĕшĕнче, 23 сехетре хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Белоруссири 3-мĕш фронтăн тата Белоруссири 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ВИЛЕЙКА, КРАСНОЕ, СТОЛБЦЫ, ГОРОДЕЯ, НЕСВИЖ хулисене туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан çарсене, ВИЛЕЙКА, КРАСНОЕ, СТОЛБЦЫ, ГОРОДЕЯ, НЕСВИЖ хулисене туртса илессишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ *И. СТАЛИН.*

1944 çулхи июлĕн 2-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ЧЕРНЯХОВСКИЕ
Совет Союзĕн Маршалне РОКОССОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронтăн çарĕсем, БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронтăн çарĕсем пулăшса пынипе, инçетрен çавăрса илмелли маневр тунă хыççăн, паян, июлĕн 3-мĕшĕнче, Совет-лă Белоруссин столицине, нимĕçсен хĕвеланăç енчи оборонин стратегиллĕ питех те паха узелне — МИНСК хулине штурмласа туртса илнĕ.

МИНСК хулине илессишĕн пынă çапăçусенче танковăй çарсен генерал-майорĕн БУРДЕЙНЫЙĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ОБУХОВĂН, бронетанковăй çарсен Маршалĕн РОТМИСТРОВĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн РОДИНĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн НЕЦВЕТАЙЛĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ВОВЧЕНКĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ФОМИНЫХĂН, ЛОСИК полковникăн, БУЛЫГИН полковникăн, НЕСТЕРОВ полковникăн, АНТИПИН подполковникăн, ГРИЦЕНКО полковникăн, ЕСИПЕНКО подполковникăн, ПОХОДЗЕЕВ полковникăн, ДОЛГАНОВ полковникăн, МИЩЕНКО подполковникăн, МОЛЧАНОВ подполковникăн, КУРНОСОВ подполковникăн, МОРОЗОВ подполковникăн, ЦИНЧЕНКО подполковникăн, танковăй çарсен генерал-майорĕн БАХАРОВĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ПАНОВĂН танкисчĕсем; ПЛИЕВ генерал-лейтенантăн, ТУТАРИНОВ генерал-майорăн, ГОЛОВСКИЙ генерал-майорăн, ПОПРИКАЙЛО полковникăн Кубань казакĕсенчен тăракан утлă çар соединенийĕсем; ГЛАГОЛЕВ генерал-лейтенантăн, ГАЛИЦКИЙ генерал-полковникăн, БАТОВ генерал-полковникăн, ЛУЧИНСКИЙ генерал-лейтенантăн, КОШЕВОЙ генерал-лейтенантăн, ПРОВАЛОВ генерал-майорăн, БЕРЕСТОВ генерал-майорăн, СТРИЖЕНКО генерал-майорăн, ПОЛЕВИК полковникăн, ДУДСК полковникăн, НОВТУНОВ полковникăн, КЛИМАХИН полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн БАРСУКОВĂН, артиллери генерал-майорĕн СЕМИНĂН, артиллери генерал-майорĕн ВЛАДИМИРОВĂН, артиллери генерал-майорĕн САЗОНОВĂН, ЛУБМАН полковникăн, ФЕДОТОВ полковникăн, ХАСИН полковникăн, СТЕПАНОВ майорăн, ЗОТОВ майорăн, ПЫТАЛЕВ подполковникăн, МИХАЙЛОВ майорăн, МАЙОРОВ подполковникăн, СЕРЕДА майорăн, БЕЛЯКОВ полковникăн артиллерисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн ХРЮКИНĂН, авиаци генерал-полковникĕн РУДЕНКĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн УШАКОВĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн БЕЛЕЦКИЙĔН, авиаци генерал-лейтенанчĕн САВИЦКИЙĔН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ЛОГИНОВĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ГЕОРГИЕВĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ТУПИКОВĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн НЕСТЕРЦЕВĂН, авиаци генерал-майорĕн ВОЛКОВĂН, авиаци генерал-майорĕн СЧЕТЧИКОВĂН, авиаци генерал-майорĕн БУЯНСКИЙĔН, авиаци генерал-майорĕн ЗАХАРОВĂН, авиаци генерал-майорĕн АНДРЕЕВĂН, ПРУТКОВ полковникăн, ЗИМИН полковникăн, ВАСИЛЬЕВ полковникăн, СКОК полковникăн, РОДИН подполковникăн, ЮРИН полковникăн, МАКСИМОВ майорăн летчикĕсем; инженернăй çарсен генерал-лейтенанчĕн БАРАНОВĂН, ПРОНЕВИЧ полковникăн, ИСУПОВ полковникăн, ФЕДОРОВ полковникăн саперĕсем тата БЕЛЫШЕВ полковникăн, МИНИН полковникăн, ГЕЛЛЕР подполковникăн связисчĕсем уйрăмах чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве ячанлăхах палăртса хăварас тесе, МИНСК хулине илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене «МИНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июлĕн 3-мĕшĕнче, 22 сехетре пирĕн Тăван çĕршывăн столици МУСКАВ, виççĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм тăватă хут пĕр харăс персе, МИНСК хулине туртса илнĕ тата МИНСКА илнĕ чухне пулăшнă хамăрăн паттăр çарсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан çарсене, МИНСК хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ *И. СТАЛИН.*

1944 çулхи июлĕн 3-мĕшĕ

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮЛĔН 2-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 2-мĕшĕнче КАРЕЛИ фрончĕн çарĕсем ОНЕГА кӳллипе ЛАДОГА кӳллисем хушшинче çаплах наступлени туса пынă, Карело-Финн ССР-ĕнчи СПАССКАЯ ГУБА ятлă район центрне туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан КИНДАСОВО, 1-мĕш СОСНАЯ ЛАМБА, 2-мĕш СОСНАЯ ЛАМБА, КИНЕЛАХТА, РАЯСЕЛЬГА, РАЯСЕЛЬТЯ ятлă пунктсене йышăннă.

ПОЛОЦК хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, малалла куçса пынă, Вилейка облаçĕнчи район центрĕсене — ШАРКОВЩИЗНА хулине тата РИТСА яле туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — ПОГОСТ, СТАРЫЙ, ЮНДЗИЛОВО, КОМАРОВИЗНА, УЖЕЧЕ, ЗАБЕЛЕ, МИХАЛЦЫ, ЛЕПЛЯНЫ, НЕСЬЦЕРОВЩЫЗНА, ТУМИЛОВИЧИ, ЗАМОСТОЧЬЕ ятлă пунктсем тата ЗЯБКИ, ПОДСВИЛЬЕ, ШАРКОВЩИЗНА чугун çул станцийĕсем.

МИНСК енче БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, наступление çав тери хăвăрт вăйлатса пырса, Белорусси ССР-ĕн область центрне ВИЛЕЙКА хулипе пысăк чугун çул станцине, Минск облаçĕнчи район центрне СМОЛЕВИЧИ хулине, КРАСНОЕ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 350 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — ЗАДОРЬЯ, ОКОЛОВО, ХОТАЕВИЧИ, МИХАЙЛОВО, ЮРОВА, ЖОДИНО, СЛОБОДА (Минскран 20 километр çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре) ятлă пысăк ялсем тата ЖОДИНО, СМОЛЕВИЧИ, КРАСНОЕ чугун çул станцийĕсем. Çапла ĕнтĕ пирĕн çарсем МИНСК хулипе ВИЛЬНО хули хушшинчи чугун çула татнă.

БАРАНОВИЧИ хули енче БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем çаплах ăнăçлăн наступлени туса пынă, Барановичи облаçĕнчи район центрĕсене—СТОЛБЦЫ хулипе пысăк чугун çул станцине, ГОРОДЕЯ хулине, НЕСВИЖ хулине, Минск облаçĕнчи район центрĕсене — ЧЕРВЕНЬ хулине, СТАРОБИНО хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 300 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — ЛАПИЧИ, ТАЛЬКА, ОКОЛИЦА СУТИН, БОБОВНЯ, ЖАУЛКИ, ЛЕНИНО, БЕЛЕВИЧИ, ЛЮТОВИЧИ, СМОЛИЧИ ятлă пысăк ялсем тата ЛАПИЧИ, УБОРСК, ТАЛЬКА, ГОРОДЕЯ, СЕРЕДНЯКИ чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем МИНСК хулипе БАРАНОВИЧИ хули хушшинчи чугун çула татнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Июлĕн 1-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 103 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 35 самолетне персе ӳкернĕ.

Сталин юлташ кăтартса панă аслă çĕнтерӳсен çулĕйĕрĕ

Виçĕ çул каярах, 1941 çулхи июлĕн 3-мĕшĕнче, пирĕн çĕршыв умне пысăк хăрушлăх туха тăнă чухне, Европăри вунă государство халăхĕсем гитлерла чуралăха кĕрсе ӳкнипе асапланнă вăхăтра, пирĕн юратнă çулпуçăн тата учителĕн Сталин юлташăн лăпкă та çирĕп шанчăклă сасси радио тăрăх пĕтĕм тĕнче илтĕнмелле янăраса кайрĕ. Пирĕн çĕршывшăн ун чухнехи лару-тăру çав тери йывăр та хăрушă пулнă: Совет Союзĕ çине кĕтмен çĕртен, ултавлăн тапăнса, гитлерла йыткĕтĕвĕсем пирĕн çĕршыв ăшнелле урса кайнă пек талпăннă, вĕсем Хĕрлĕ Çара çиçĕмле пырса çапса аркатса тăкма, Совет Союзне пĕтерсе лартма хапсăннă. Ун чухне тĕнчере нумайĕшĕсем шĕн фашистла нимĕç захватчикĕсене чарса лартма, сирсе пăрахма тата çапса аркатма пултаракан вăй çук та пек курăннă.

Сталин юлташ хăйĕн сăмахĕнче ултавлă та тискер тăшманăн ирсĕр ĕмĕчĕсене тăрă шыв çине кăларчĕ, Совет Союзĕнчи халăхсене йывăр та хаяр чăнлăха большевикла тӳрĕлĕхпе кăтартса пачĕ, вĕсене пурне те хамăрăн тăван çĕршыва хӳтĕлемешкĕн пĕр сын пек пулса ура çине тăма чĕнчĕ, халăхсен кĕрешĕвĕпе çĕнтерĕвĕн çулйĕрне çутатса пачĕ.

Сталин юлташ тăшманăн тискер кайăкла сăн-сăпатне уçса кăтартрĕ. Тăшман çак вăрçăра хăйичченех ĕмĕрне те пулман çав тери тискер ĕмĕт тытнă: вăл пирĕн халăха вăлерсе пĕтерме, пирĕн халăх никама пăхăнмасăр, хăйĕн государствинче пĕтĕçсе пурăнассине пĕтерсе тăкма хапсăннă. Çак вăрçăн тĕп хăрушлăхĕ—çавăнта пулнă та ĕнтĕ.

«Тăшман хаяр та сĕмсĕр, — тенĕ Сталин юлташ 1941 çулхи июлĕн 3-мĕшĕнче хăйĕн сăмахĕнче. — Вăл эпир тар юхтарса ĕçленĕ çĕрсене туртса илме, хамăр вăйпа ĕçлесе тунă тырпула нефте туртса илме тĕллев лартать. Вăл помещиксен влаçне каялла тавăрма, царизма каялла тавăрма, вырăссен, украинецсен, белоруссен, литовецсен, латышсен, эстонецсен, узбексен, тутарсен, молдавансен, грузинсен, армянсен, азербайджансен тата Совет Союзĕнчи ытти ирĕклĕ халăхсен национллĕ культурипе национллĕ государственноçне пĕтерсе хума тĕллев лартать, вĕсене нимĕçлетес, вĕсене нимĕç князĕсемпе баронĕсен чурисем туса хурас тĕллев лартать. Çапла вара, ĕç Совет государствин пурнăçĕпе вилĕмĕ çинчен, ССР Союзĕнчи халăхсен пурнăçĕпе вилĕмĕ çинчен, Совет Союзĕнчи халăхсем ирĕклĕн пурăнасси е вĕсем чуралăха кĕрсе ӳкесси çинчен пырать».

Сталин юлташ Совет Союзĕ туса пыракан вăрçăн характерĕпе тĕллевне уççăн кăтартса пачĕ, çак вăрçă вăл пĕтĕм халăхăн Отечественнăй вăрçи пулса тăнине, çак вăрçăра Совет государствипе ССР Союзĕнчи халăхсен кун-çулĕ пирки ĕç татăлассине кăтартса пачĕ. Фашистла Германие хирĕç пыракан вăрçа ялан пек вăрçă тесе шутлама мар, — тенĕ Сталин юлташ. — Вăл икĕ çĕршыв хушшинчи вăрçă çеç мар. Вăл çавăнпа пĕрлех тата нимĕçсен фашистла çарĕсене хирĕç пĕтĕм Совет халăхĕ туса пыракан аслă вăрçă пулса тăрать.

Кун пек вăрçă этемлĕх историйĕнче халиччен урăх пулман. Вăл чи ишĕлтерекен вăрçă, моторсен вăрçи, темиçе вуншар миллионлă çарсен вăрçи пулса тăрать, çак вăрçăра государствăсемпе халăхсен пурнăçĕпе вилĕмĕ çинчен ыйту тăрать.

Сталин юлташ, пĕтĕм тĕнчери кучукнехи лару-тăрăва тĕплĕн анализ туса тата тĕнчери ирĕклĕхе юратакан халăхсем гитлерла чуралăха хирĕç кĕрешни саралса пынине шута илсе, çакна кăтартса пачĕ: гитлерла Германие хирĕç, ирĕклĕхшĕн пыракан çак аслă вăрçăра Совет Союзĕ пĕччен пулмасть.

«Хамăр тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн пыракан пирĕн вăрçă Европăпа Америкăри халăхсем хăйсем никама пăхăнмасăр пурăнассишĕн, демократиллĕ ирĕклĕхсемшĕн туса пыракан кĕрешӳпе пĕрлешсе кайĕ. Çакă вăл Гитлерăн фашистла çарĕсем чуралантарнине хирĕç тата чуралантарас хăрушлăха хирĕç, ирĕклĕхшĕн тăракан халăхсен пĕрлĕхлĕ фрончĕ пулĕ».

Аслă Сталин çакна уçăмлăн кăтартса пачĕ: фашистла Германи, Совет Союзĕ çине кĕтмен çĕртен тапăнса вăрçă пуçламăшĕнчех хăйĕн çарĕсемшĕн вăрçăра кăшт вăхăтлăха усăллă лару-тăру туса хучĕ, анчах та вăл, хăй юнлă агрессор пулнипе пĕтĕм тĕнче умĕнче тăрă шыв çине кăларса, политика тĕлĕшĕнчен çиен курчĕ.

«Иккĕленмелли çук, — тенĕ Сталин юлташ, — Германи вăрçă тĕлĕшпе кĕске вăхăтлăха тунă çак ăнăçу эпизод çеç пулса тăрать, ССР Союзĕ политика тĕлĕшпе тунă питех те пысăк ăнăçу вара пысăк вырăнта тăракан тата нумай вăхăтлăха пыракан фактор пулса тăрать; çак фактор никĕсĕ çинче фашистла Германие хирĕç пыракан вăрçăра Хĕрлĕ Çарăн вăрçă ĕçĕсенче татăклă çитĕнӳсем пулмалла». «Пирĕн ĕç—тĕрĕс ĕç, тăшмана çĕмĕрсе тăкатпăр, эпир çĕнтерме тивĕç», —тенĕ Сталин юлташ.

Вăрçă пынă мĕнпур тапхăр Сталин юлташăн çак вывочĕсемпе положенийĕсене, вăл наука тĕлĕшĕнчен малтанах курса тăнине пĕтĕмĕшпех çирĕплетсе парать.

Малалла Сталин юлташ никам çĕнтерейми çарсем çуккине тата пулманнине кăтартса панă. Гитлерăн фашистла çарне те çапса çĕмĕрме май пур, ăна Наполеонпа Вильгельм çарĕсене çапса çĕмĕрнĕ пекех çапса çĕмĕрессĕ.

Сталин юлташ Отечественнăй вăрçа тата тĕнчери иккĕмĕш вăрçа пĕтĕмĕшпе илсе анализ тунине вăрçă фрончĕсенче пулса пыракан событисем туллин çирĕплетсе пачĕç. Сталин юлташ малтанах гениллĕ курса тăрса кăтартса панисем пурнăçа кĕчĕç, пурнăçа кĕрсе пырĕççĕ те.

Ленин — Сталин партийĕ чĕннипе, Сталин юлташ чĕннипе пĕтĕм совет халăхĕ хамăрăн социализмлă тăван çĕршыва, Октябрьти социализмлă революцин аслă çĕнтерĕвĕсене хӳтĕлеме çĕкленчĕ.

Сталин юлташăн пирĕн Отечественнăй вăрçă мĕнле пулса пырассине тата вăл мĕнпе пĕтессине уççăн кăтартса паракан сăмахĕпе хавхаланнă совет халăхĕ тата пирĕн Хĕрлĕ Çар вăрçăн малтанхи çулĕнчех геройла паттăр ĕçсем турĕç. Пирĕн çĕршыв хăйĕн пĕтĕм хуçалăхне вăрçă нушисене тивĕçтермелле туса йĕркелерĕ, хăйĕн мĕнпур вăйĕсене фронта пулăшма мобилизацилерĕ, Хĕрлĕ Çар вара 1941 çулхи кĕркунне тата 1942 çулăн пуçламăшĕнче фашистла нимĕç вăрă-хурахĕсене Мускав патĕнче çапса аркатса, темиçе çĕр километр каялла сирсе ывăтрĕ.

Отечественнăй вăрçăн виçĕ çулталăкĕ хушшинче совет халăхĕпе унăн çарĕ пысăк çĕнтерӳсем турĕç. Совет Союзĕн вăрçă тĕлĕшĕнчи тата политикăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи хăвачĕ ӳсрĕ, унăн пĕтĕм тĕнчери сыхăнăвĕсем çирĕпленчĕç. Гитлерла Германие хирĕç кĕрешекен халăхсен коалицийĕ тĕрекленчĕ. Пĕтĕм тĕнчери аслă çĕршывсем гитлерла Германие Хĕвеланăçĕнчен тата Хĕвелтухăçĕнчен пĕр вăхăтрах хĕссе пырас вăхăт килсе çитрĕ. Европăри пусмăрти халăхсем хăйсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешĕвне вăйлатса пыраççĕ. Германин вăрçă тĕлĕшĕнчи хăвачĕ чакса пырать, вăл Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра пысăк çухатусем тӳсет, унăн шалти тата тулашри политикăллă лару-тăрăвĕ начарланса пырать. Гитлерăн вăрă-хурахла блокĕ саланса кайма тытăнчĕ. Гитлерла Германи татăклăнах катастрофă тӳсесси патнелле пырать.

Сталин юлташăн 1941 çулхи июлĕн 3-мĕшĕнче каланă сăмахĕ историллĕ калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Хăйĕн çав сăмахĕнче Сталин юлташ совет халăхĕпе унăн паттăр Хĕрлĕ Çарĕн тĕп задачисене малтанах гениллĕ витĕр курса палăртса пачĕ. Вăл мĕнпур совет çыннисене йăвашчунлăха, тимсĕрлĕхе пĕтерме, мирлĕ вăхăтри шухăш-кăмăлран хăтăлма тата пирĕн çĕршыв çине ултавлăн тапăннă тăшмана хирĕç кĕрешмешкĕн хамăрăн пĕтĕм вăя мобилизацилеме чĕнчĕ.

Сталин юлташ ССР Союзĕнчи халăхсене хамăрăн пĕтĕм çĕршыва кĕске вăхăтрах пĕрлĕхлĕ çар лагерĕ туса хума, пĕтĕм хуçалăха вăрçă ыйтнă пек урăхлатса çĕнетме, промышленность предприятийĕсене вăрçă пыракан вырăнсенчен Хĕвелтухăçне куçарма, илсе тухма май çуккисене пĕтĕмпех çĕмĕрсе хăварма чĕнчĕ. Сталин юлташ ертсе пынипе çак задачăсене пурне те чыслăн пурнăçа кĕртнĕ, — çĕршывăн пĕтĕм хуçалăхĕ вăрçă валли ĕçлеме тытăнчĕ.

Совет халăхĕпе Хĕрлĕ Çарăн çак боевой программине Сталин юлташ хăй каярахпа туса каланă сăмахĕсенче тата приказĕсенче аталантарса пычĕ. Вăл Отечественнăй вăрçă кунĕсенче туса каланă сăмахсем вăрçă искусстви çинчен калакан чăн-чăн марксистла-ленинла наука, марксизм-ленинизм пуянлăхне ӳстерни пулса тăраççĕ. Сталин юлташăн çав сăмахĕсемпе приказĕсем миллионшар массăсен тĕрĕс руководстви, этемлĕхĕн чи хаяр тăшманне — Германи фашизмне хирĕç кĕрешес ĕçри теориллĕ тата практикăллă руководство пулса тăраççĕ.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче Сталин юлташ туса каланă сăмахсемпе приказсене пирĕн ывăнма пĕлмесĕр вĕренес пулать, вĕсене хамăрăн практикăллă ĕçĕн тата агитаципе пропаганда ĕçĕн никĕсне хурас пулать. Çулпуçăн сăмахĕсемпе приказĕсене тĕплĕн пĕлсе тăни тата вĕсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешни ыхланлă тăшмана çĕнтермелли чи кирлĕ условие пулса тăрать.

Пирĕн пĕтĕм халăхпа большевиксен партийĕ гениллĕ çулпуç, организатор тата полководец Сталин юлташ ертсе пынипе шанчăклăн малалла утаççĕ. Вĕсем, хăйсен çулпуçĕ тавра таччăн пĕтĕçсе тăрса, мирлĕ вăхăтри пекех, Отечественнăй вăрçăн çак йывăр кунĕсенче те историллĕ пысăк çĕнтерӳсем турĕç.

Халĕ, вăрçă хăйĕн татăклă та хĕрӳллĕ тапхăрне кĕнĕ вăхăтра, пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар тăшмана татах та вăйлăн аркатса пырса Совет çĕрне фашистла ирсĕрсенчен тасатнă вăхăтра, совет халăхĕпе пирĕн большевиксен партийĕ кĕрешӳре хавхалантарса тата организацилесе пыракан Сталин юлташ тавра татах та таччăрах пĕтĕçессĕ.

Сталин юлташ пире: тунă çитĕнӳсемпе лăпланмалла мар, тесе вĕрентет. Çĕнтерӳ нихăçан та хăй тĕллĕнех килмест. Тăшман вăйлă-ха, ăна татăклăнах çĕмĕрсе тăкман. Вăл урса кайса хирĕç тăрать. Тăшмана амантнă, анчах вăл хăрушă пулма пăрахмасть. Хĕрлĕ Çар Германи чиккисем патнелле çывхарса пынă май, вăл татах та хаяррăн хирĕç тăрĕ. Ăна хыçранах йĕрлесе пырса, унăн хăйĕн шăтăкĕнчех пĕтерсе тăкмалла. Çавăнпа пирĕн малашне те хамăрăн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле, фронта мĕн кирлине йăлтах парса тăмалла, тăшмана татăклăнах çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара вăйлăнрах та вăйлăнрах пулăшса пымалла.

И. ИВАНОВ,
ВКП(б) Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Кашни рабочи икĕ станокпа ĕçлеме пултарать

Эпĕ Канашри вагонсем юсакан заводра ĕçлеме тытăннăранпа виçĕ çул çитет ĕнтĕ. Çак тапхăрта токарь квалификацине туянтăм, халĕ акă, икĕ станокпа ĕçлесе, куллехи нормăна 600—650 процент тултаратăп. Мĕнле турăм-ха çак çитĕнĕве? Ĕçĕн ăнăçлăхĕ пĕтĕмпех техникăна тĕплĕ вĕреннинче тата ĕçе лайăх организацилеринче пулать. Малтанах эпĕ пĕр станокпа ĕçлесе те нормăна аранаран тултараттăмчĕ. Техникăна алла илнĕ май лайăхрах ĕçлеме пуçларăм.

Цехра ĕç вăйĕ çитмен пирки, мăна икĕ станокпа ĕçлеме ыйтрĕç. Чăн та, малтанах йывăр пек туйăнатчĕ. Халĕ ĕнтĕ икĕ станокпа та малтанхинчен лайăхрах ĕçлетĕп. Икĕ станокпа ĕçлеме, чи малтанах станоксене тĕплĕн пĕлни кирлĕ. Ĕçе пуçăниччен ĕç вырăнне лайăх хатĕрлесе, йĕркелĕхпе тасалăх тытма хăнăхмалла. Цеха ĕç пуçланиччен пĕр 10—15 минута малтан пырса, инструментсемпе материалсене хатĕрлесе хумалла. Икĕ станокпа ĕçлеме квалификациллĕ кашни рабочи пултарать.

Икĕ станокпа ĕçлессине сарса пыни сахаллăн ĕçлесех çĕршывпа фронт валли ытларах продукци туса кăларма, çапла вара çĕнтерӳ сехетне çывхартма пулăшать.

Токарь **М. ФОМИНА.**

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

П. Г. Москатова Ленин орденĕпе наградăласси çинчен

Оборона промышленноçĕ тата транспорт валли рабочисен квалификациллĕ кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе правительство панă заданисене ăнăçлăн пурнăçласа пынăшăн, тата çуралнăранпа 50 çул тултарнă май, СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Ĕç резервĕсен Главнăй Управленийĕн начальникне Петр Георгиевич Москатова Ленин орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи июлĕн 1-мĕшĕ.

Танксемпе самолетсем тума

МУРКАШ, июлĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). Комсомолăн Янăш ялсоветĕнчи «Красный борец» колхозри пуçламĕш организацин секретарĕ Ахманов юлташ колхозра агитациллĕ-массăллă ĕçе кăтартуллăн туса пырать, ялти мĕнпур комсомолецсемпе çамрăксене лайăхрах ĕçлеме çĕклет, Хĕрлĕ Çара пулăшма мобилизацилет.

Çак кунсенче вăл, колхозри комсомолецсем хушшинче Ферапонт Головатыйăн çырăвне сӳтсе-явнă хыççăн, Хĕрлĕ Çар валли боевой машинăсем тума укçа пухас ĕçе пуçарса, 2.000 тенкĕ пачĕ. Ăна кура вара çак ĕçе ытти комсомолецсем те хутшăнчĕç. Çапла пĕтĕмпе 14.205 тенкĕ укçа пухрĕç. Вăл шутран А. Николаев 750 тенкĕ, Ф. Волков 690 тенкĕ, М. Смирнова 500 тенкĕ пачĕç.

И. ГРИГОРЬЕВ.

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Красин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем хăйсем проектлесе хăварнă укçа-тенкĕне Хĕрлĕ Çар валли хĕçпăшал тума хываççĕ. Колхоз председателĕ М. Школьникова 3.000 тенкĕ, агротехник М. Дорягин 2.000 тенкĕ укçа хывнă.

Бригадир Скворцова юлташ, Хĕрлĕ Çар валли хĕçпăшал туянма 2.000 тенкĕ парса, çапла каланă:

— Манăн атте Хĕрлĕ Çар ретĕнче тăшманпа хирĕç кĕрешет. Виçĕ çул вăрçă пырать ĕнтĕ, анчах та эпир колхозра тутă пурăнатпăр, çи-пуççем те питĕ. Перекетленĕ укçа-тенке пĕтĕмпех Хĕрлĕ Çар валли хыватăп. Умра хĕрӳллĕ ĕçсем тăраççĕ. Утă çулмалла, тырăсене пуçса кĕртмелле. Çак ĕçсене манăн бригада ăнăçлăн пурнăçлĕ, тесе шантаратăп.

Фронтран аманса таврăннă А. Автономов тата Петров юлташсем те Хĕрлĕ Çар валли хĕçпăшал туянма 1000-шар тенкĕ хыврĕç.

С. ШАДИН.

РЕСПУБЛИКА УЙХИРĔСЕНЧЕ

Тракторсем килессе кĕтессĕ

МУРКАШ, июлĕн 3-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Малта пыракан колхозсем çĕртме сухине правительство кăтартнă срокĕсенче тата лайăх сухалаççĕ. Ку енĕпе уйрăмах «Крестьянин», «Аврора», «Пионер» тата Свердлов ячĕпе тăракан колхозсем аван тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Çав колхозсенче çĕртме 15—16 сантиметртан ашăх мар сухаланă, сухана çыхсăр хăварнă.

«Пионер» колхоз — пысăк мар, унта çĕртме пуссине — 25 гектар çине 2600 лав тислĕк тăкнă. Тислĕке сийĕнчех сухалаççĕ, тислĕке çĕр сухалла тăрраса витнĕ. Тислĕке колхозниксен килĕсенчен те пухса турттарнă. Çапла Е. Григорьева колхозница 105 лав, Д. Якимова, Т. Сергеев колхозниксем 80-шар лав тислĕк панă.

Тасă çĕртме тумалли плана «Çĕнĕ Шурча», «Большевик», «Чăваш Коммуни» тата ытти колхозсем те тултарнă.

Анчах районри чылай колхозсем çĕртме тума васкамаççĕ-ха. «Авангард» колхозăн 180 гектар çĕртме тумалла. Кунта колхозниксем çĕртме тума июлĕн 25-мĕшĕнче тин тухнă та унтанпа пурĕ 50 гектар кăна сухаланă.

— Мĕскер, çынри турттăм вăйĕ сахал-им? — тесе ыйтсан: — Турттăм калас, ситет, — тет колхоз председателĕ Х. Константинов юлташ. — Кашни бригадăрах пирĕн вăтамран 10—12 лаша çитет.

Колхозра пурĕ 6 бригада, анчах та çĕртме тума кашни бригадăран икшер лаша çеç тухать. Вĕсем те кун каçа ĕçлемеççĕ, кăнтăрла çитсен хирĕ тухаççĕ те каçхине иртерех киле таврăнаççĕ.

Колхоз председателĕ Константинов юлташ çĕртме тăвас ĕçе тракторсем килессе кĕтсе тăрать. Анчах колхоз çĕртме тума хăйĕн вăйĕсене мобилизацилессишĕн тăрăшмасть.

Шĕмшерĕ ялсоветĕнчи «Звезда» колхозăн çĕртме тума 145 гектар сухалаласси, паянхи куна 45 гектар кăна сухаланă. Ку колхозра та лашасем нумай. Ку колхозра председателĕ Я. Николаев юлташ та трактор килессе кĕтет.

Çакна паянхи кун тĕпне районра пурĕ 56 колхоз çĕртме туса пĕтернĕ. Колхозсем тракторсем пырасса кĕтсе ларасшăн ĕçлемеççĕ. Халĕ кашни колхоз çĕртме тунă чухне пур вăйсене те мобилизацилемелле, çĕртме сухине агротехника кăтартнă срокĕсенче, лайăх хăлаха пăвармалла.

Т. ИВАНОВ.

Çĕртме тăвас ĕçе вăраха тăсаççĕ

Элĕк районĕнчи колхозсем çĕртме тăвас ĕçе пит вăраха тăсаççĕ. Паянхи куна 76 колхозран 4 колхоз кăна çĕртме тума планне тултарнă. Кармалти «Комсомолец» колхоз (председателĕ Максимов юлташ) 79 гектар вырăнне 16 гектар, «Красная Армия» колхоз (председателĕ Семенов юлташ) 113 гектар вырăнне 5 гектар, «Комбайн» колхоз (председателĕ Васильев юлташ) 103 гектар вырăнне 8 гектар кăна çĕртме тунă. Кун пек колхозсем районра татах та шумай.

Çĕртме тăвас ĕç çакăн пек япăх пыни, чăн малтанах, çак ĕçре лашасене тирлĕ пек усă курманнинчен килет. «Комбайн» колхозра 38 лаша, анчах çĕртмере çуррине те ĕçлеттермеççĕ. Çĕртме тума ирхине 10 сехетре тухаççĕ те каçхи 7—8 сехетре кăна таврăнаççĕ. Элĕври «Большевик» колхоз июлĕн 27-мĕшĕнче кăна çĕртме тума тухнă, кунта пек ĕçлени ...

Çĕртме тăвас ĕçе колхоз председателĕсем кăна мар, бригадирсем те витрĕ çине пăхмаççĕ. Вăхăтра çĕртме тума тухни пулăх хуçалăхне ... ни пулнине элĕксем манса кайнă. Райисполкомпа çĕрĕç пайĕ те çак ответлă ĕç çине сӳрĕк пăхаççĕ.

Х. ЛИСИН.

Выльăхсем валли çителĕклĕ апат, лайăх вите пултăр

КАЛИНИНО. Услапари «Броневик» колхоз членĕсем колхозри выльăхсем валли апат çителĕклĕ хатĕрлессишĕн çине тăрса ĕçлеççĕ. Вĕсем 6 тонна тĕрлĕ курăк пухса типĕтнĕ. Кунта 35 ĕне валли çĕнĕрен вите туса лартрĕç.

Вĕлтрен тата арăмути пухас ĕç ытти колхозсенче те анлăн пырать. «Большевик» колхозра 50 центнер ытла арăмути тата хăй тĕллĕн ӳсекен ытти курăксем пухса типĕтнĕ.

Чылай колхозсем клевер çулма тытăнчĕç.

(Хамăр корр.).

Кок-сагыз вăрлăхне пухаççĕ

ВĂРМАР, июлĕн 3-мĕшĕ. (Телефонпа). Иккĕмĕш çул ӳсекен кок-сагыз вăрлăхĕсене пухас ĕç чылай колхозсенче ăнăçлă пырать. «Свобода» колхозра 5 гектар çинче 8 центнер ытла вăрлăх пухнă. Кок-сагыза пăхса ӳстерес тĕлĕшпе кунта ятарласа тунă звено ĕçлет. Звенора пурĕ 15 çын. Вăрлăх пухас ĕçе звено членĕсемсĕр пуçне шкул ачисемпе пионерсем те йышлăн хутшăннă, кăшпĕр кунсенче кок-сагыз хирĕнче 40—50 ача ĕçленĕ. Звено кок-сагыза çумкурăксенчен тасатнă тата икĕ хутчен кăпăшкалатнă.

Партин 15-мĕш съезчĕ ячĕпе тăракан колхозра та 3 гектар çинчи кок-сагыза 2 хутчен çумланă. Кок-сагыз калчисем лайăх ӳсеççĕ. «Чувашский крестьянин» колхозра кок-сагыз 7 гектар йышăнать. А. Павлова юлташ ертсе пыракан звено çумăрлă кунсем пуçланиччен, кок-сагыз калчисене кашни кунах шăварнă, кăпăшкалатса тăнă. Павлова юлташ звени кăçал кок-сагыз тымарне кашни гектартан пысăк тухăçпа пухса, фронта каучук ытларах туса парассишĕн тăрăшса ĕçлет.

Агроном А. ГАВРИЛОВА.

Хурт-хăмăр пысăк тупăш парать

Йĕпреç ялсоветĕнчи Крупская ячĕпе тăракан колхозра хурт-хăмăр утарĕ пур, çак утарта пчеловод В. И. Воронцов юлташ ĕçлет. Колхоз хурт-хăмăр ĕрчетме 1933 çулта тытăннă, ун чухне кунта пурĕ те 8 çемье кăна пулнă. Кăçал çуркунне вара утара 280 çемье хурт-хăмăр кĕларса лартрĕç.

Иртнĕ çул колхоз утартан пысăк тупăш илчĕ. Колхозниксене кашни ĕçкунĕ пуçне 100 грамм пыл валеçрĕ. Воронцов юлташ кăçал кашни ĕçкунĕ пуçне 300 грамм пыл валеçмелле тăвассишĕн тăрăшса ĕçлет.

Д. ВАСИЛЬЕВ,
Йĕпреç ялсоветĕн председателĕ.

ХАЛĂХ ХĔÇПĂШАЛĔ ÇĔНТЕРӲ ТĂВАТЬ

Ирĕке кăларчĕ
Çулăмлă Октябрь,
Шуçăм пек хăпарчĕ,
Çутăлчĕ тĕнче.
Туслăх вăй-хăвачĕ —
Хĕрлĕ Çар çуралчĕ,
Ун ятне чыслатпăр
Аслă Çĕр çинче.
Хĕрлĕ Çар мухтавлă,
Хĕрлĕ Çар хăватлă,
Хĕрлĕ Çар хăвачĕ—
Сталинла хăват!
Халăх хĕçпăшалĕ
Тăшмана тĕп тăвĕ,
Халăх хĕçпăшалĕ
Çĕнтерӳ тăвать!
Пĕрре мар салатнă,
Нимĕçе аркатнă
Перекопăн чапĕ
Улăп пек тăрать.
Тăшман тапăнсассăн—
Ялан çапса ватнă.
Юмахри герой пек
Пирĕн Сталинград.
Хура тăвăл евĕр,
Саранча пек шутсăр
Нимĕç килсе тухрĕ —
Аскăн-тискер çар.
Эпĕр хăрамарăмăр,
Эпĕр пуç усмарăмăр,
Паттăррăн кĕрешрĕмĕр,
Тăтăмăр хастар.
Хĕрлĕ Çар мухтавлă,
Хĕрлĕ Çар хăватлă,
Хĕрлĕ Çар хăвачĕ —
Сталинла хăват!
Халăх хĕçпăшалĕ
Тăшмана тĕп тăвĕ,
Халăх хĕçпăшалĕ
Çĕнтерӳ тăвать!

К. МИХАЙЛОВ-РУСЬ.

Чăваш писателĕсем торф кăларакансем патĕнче

Чăваш халăх поэчĕсем — Н. И. Шелепи, С. В. Эльгер, поэт Ст. Шавлы тата Л. Агаков июлĕн 1-мĕшĕнче Атăл лешьенчи торф предприятийĕнче ĕçлекен рабочисем патĕнче литература вечерĕ туса ирттерчĕç.

Симĕс йывăç тураттисемпе, чечексемпе илемлетсе пĕтернĕ клуба каçхине рабочисем 300 çын таран пухăннă. Парторг Синцов юлташ рабочисене хăйсем патне пынă писательсемпе паллаштарчĕ. Унтан писатель-орденоносец Л. Агаков чăваш литератури Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче епле ӳссе пыни çинчен каласа кăтартрĕ. Ун хыççăн вара писательсем хăйсен произведенийĕсене вуласа пачĕç.

Чăн малтанах Н. И. Шелепи «Фашизма — вилĕм!» ятлă сăввине хĕрӳллĕн каласа пачĕ. Унтан С. В. Эльгер, Ст. Шавлы темиçешер хутчен тухса хăйсен сăввисене вуларĕç. Л. Агаков хăйĕн «Юрă» ятлă калавне вуласа пачĕ.

Лаша вилнĕшĕн айăплисене ответ тыттарма ыйтатпăр

(Редакцине килнĕ çыру)

Шупашкар районĕнчи «Красная звезда» колхозра лашасене йĕркеллĕ пăхмаççĕ, вĕсемпе тĕрĕс усă курмаççĕ. Савна пула çуракине июнь уйăхĕнче кăна вĕçлерĕмĕр. Лашасене вĕлереççĕ, анчах та уншăн никама та ответ тыттарни çук. А. Павлов колхозник, ӳсĕрпе ытла та хытă çӳресе, чи лайăх лашана вĕлерчĕ. Вăлах, Иван Миштерпе пĕрле, тепĕр лашана автобуса çапăнтарса вĕлерчĕ.

Эпир, ВКП(б) Обкомĕн XIX пленумĕнче Мартынов юлташ тунă доклада вуланă хыççăн, лашасене йĕркесĕр тыткалакансемпе малашне килĕшме çуккине куртăмăр, çавăнпа пирĕн колхоза юхăнтаракансене ответ тыттарма ыйтатпăр.

Колхозницăсем:
Н. ЗАХАРОВА,
П. ЕФИМОВА,
Н. МИХАЙЛОВА.

Пирĕн танкистсем

...Ушанковăн танкĕ засадăра тăнă. Нимĕçсем çӳллĕрех сăрта йышăнса илме хăтланнă. Чăваш калăх ывăлĕн пулеметран тата тупăран персе тăрса хамăрăн пехотăна пулăшас килнĕ. Анчах Ушанкова тăшманăн танкĕсем е транспортерĕсем курăнсан çеç пеме хушнă пулнă.

Юлашкинчен, пирĕн пехотăпа нимĕçсен пехоти хĕрсе çапăçнă вăхăтра, Ушанков лупам тăрăх тăшманăн танкĕ, бронетранспортер тата тăшман пехотине тиенĕ грузовик пынине асăрханă. Ушанков хăйĕн экипажне команда панă. Тупă сасси янраса кайнă. Тăшман танкĕ те çав самантрах чарăнса ларнă.

Ушанков тăшман танкĕ çине тепĕр снаряд янă та танка çулăм хыпса илнĕ. Пирĕн танкистсем, вăхăта сая ямасăр, транспортерпа машина çине пеме пуçланă. Вĕсене те часах вут хыпса илнĕ. Тăшман салтакĕсем грузовик çинчен сике-сике анса тарма пуçланă. Пирĕн танкистсем пулеметран пеме пуçланă. Ушанков хăйĕн танкне засадăран илсе тухнă. Вăл хăйĕн танкне вăхăтра илсе тухнă, мĕншĕн тесен нимĕçсен артиллерийĕ çавăн хыççăнах танк тăнă çăрай çине пеме пуçланă.

...Ушанкова засадăра ырлăх сунса хăварнă хыççăн, паян эпир çапăçусен хирне кайма тухрăмăр. Часах пĕр тĕлĕнмелле ĕç пулса иртнине куртăмăр. Танкист шлемне тăхăннă, аллине пистолет тытнă офицер тыткăна лекнĕ румын салтакĕсене илсе пырать.

— Ну, эсир, кĕлмĕçсем, хăвăртрах çаврăнкалăр, — тесе команда парать вăл, румынсене васкатса.

— Ăçтан кусем, — ыйтрĕ пирĕнпе пыракан офицер.

— Эпĕ тыткăна илнисем, — ответлерĕ офицер-танкист.

Офицерăн тумтирĕ чылай çĕртен çурса шăтнă, хăйне вара пĕтĕмпех тусан витсе илнĕ гимнастерки çурăм хыçĕнче çурăлса кайнă...

Штабра эпир çак ĕç мĕнле пулса иртнине тĕплĕн пĕлтĕмĕр.

Танксем хĕрсе çапăçнă вăхăтра Смирновăн (танкист шлемĕ тăхăннă офицерăн хушамачĕ çавăн пек) танкĕ мина çине кĕрсе кайнă. Смирнов çавăнтах машинăран тухнă. Инçех те мар траншея пулнă. Танкист унта тăракан румынсене курнă. Вара вăл румынсен ушкăнĕ çине пĕр граната ывăтнă та теприне çӳлелле çĕклесе кăшкăрнă:

— Парăнăр! — тенĕ.

Румынсем аллисене çӳлелле çĕкленĕ, офицер вĕсене штаба илсе ситернĕ.

* * *

Прут шывĕн лешьенче танксен çапăçăвĕсем, атакăсем, артиллерирен хирĕç персе тăнисем юлашки кунсенче те пĕр вĕçĕмсĕр пулса иртеççĕ.

Пирĕн танкистсем ялан пысăк паттăрлăхпа çапăçаççĕ.

Эпĕ пĕррехинче йывăр суранланнă танкист — Çĕпĕр çынни Дубровец пĕр офицера хăй патнерех çывхарма чĕнсе çапла каланине куртăм:

— Акă çакăнта, гимнастерка кăсьинче, эпĕ киле çырнă çыру пур. Эпĕ вилсен вăл çырăва киле ярăр, эпĕ хастарлăн çапăçса вилни çинчен пĕлчĕр... Унта пĕтĕмпех çырнă.

Пирĕн танкистсен мухтавлăхĕ çинчен тата çак факт та уçăмлăн каласа парать.

Танк командирĕ Макаров тăшманăн 4 танкне пĕтернĕ хыççăн, нимĕçсемпе румынсен пехоти хушшине кĕрсе кайнă. Çав вăхăтра унăн танкĕ çунма пуçланă. Макаров хăйĕн экипажĕпе пĕрле танкран тухнă. Йĕри-таврах тăшман салтакĕсем пулнă. Макаров хăйĕн экипажĕпе пĕрле, пĕр минута сая ямасăр тата хăй çинчи тумтир çуннине пăхмасăр, автоматран персе, гранатăсем ывăтса, гитлеровецсем патнелле ыткăннă. Нимĕçсемпе румынсен тарма тивнĕ. Пирĕн пехотинецсем танкистсемпе пĕрлешсен, вĕсен çывăхĕнче нимĕç салтакĕсен 15 вилли выртнине тата çĕмĕрсе тăкнă висĕ радиостанцие курнă.

Совет танкĕсен хурçă бронисем хыçĕнче никам çĕнтереймен хăватлă чĕреллĕ çынсем ларассĕ.

...Эпир танковăй чаçрен кас пулас умĕн, машинăсем каçхи засадăна саланнă вăхăтра тухрăмăр. Прут шывĕн лешьенчи нумай çапăçусенчен çĕнтерӳллĕн тухнă танкистсен сăн-сăпатĕнче паттăрлăх тата çĕнтерӳ тăвассине çирĕппĕн шанни палăрса тăрать.

А. БУЛГАКОВ.
(«ИЗВЕСТИЯ» хаçат корреспонденчĕ).
ДЕЙСТВУЮЩИ ÇАР.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, июлĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 1-мĕшĕнче ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Союзниксен çарĕсем хăйсен Одон шывĕ çинчи позицийĕсене икĕ флангра та çирĕплетеççĕ. Тăшман Кан-Эвреси секторĕнче татса кĕме хăтланнисене пурне те союзниксем сирсе янă. Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Ĕнерхи кун пирĕн авиаци тăшман çарĕсем куçакан çулйĕрсен узелĕсем çине тата снабжени линийĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Кăнтăрла вĕçекен йывăр бомбардировщиксем Франципе Бельгири 5 аэродрома тапăннă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах тăшманăн пĕр çĕре пухăнса тăнă бронетанковăй вăйĕсем çине бомбăсем пăрахнă».

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 1-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Союзниксем Одон шывĕ районĕнче малалла куçни пулман. Эске çывăхĕнче тăшман тĕллĕн-тĕллĕн атакăсем тунă тата пирĕн çарсем тăракан вырăна хĕвелтухăçĕнчен сăрхăнса кĕме хăтланнă, анчах та тăшманăн ĕçĕ ăнăçсăр пулнă. Де-ла-Аг сăмсахĕ çинче хирĕç тăракан тăшман чаçĕсем йышăнакан ансăр территори татах пĕчĕкленсе юлнă. Паян кăнтăрла иртсен çанталăк пăсăлса кайнă та авиаци ĕçĕсене самаях чăрмантарнă».

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 2-мĕшĕнче ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Котантен çурутравне тăшманран тасатса пĕтернĕ. Де-ла-Аг сăмсахĕ çинче тăшман июлĕн 1-мĕшĕнче ирхине хирĕç тăма пăрахнă. Тилли-сюр-Сельтен кăнтăртарахри участокра тăшман темиçе хутчан те контратакăсем пуçласа янă, вăл унта союзниксен Одон шывĕ патĕнчи укреплениййĕн хĕвеланăç флангне тапăннă. Союзниксем хăйсен позицийĕсене çирĕп тытса тăраççĕ. Тăшман çынсемпе танксем тĕлĕшĕнчен чылай пысăк çухатусем тӳсет.

Начар çанталăк июлĕн 1-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен те авиацие активлăн çапăçма паман».

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Союзниксен Одон шывĕ районĕнчи укреплениййĕ, тăшман татти-сыпписĕр хĕсет пулин те, çирĕп тытăнса тăрать. Июлĕн 1-мĕшĕнче кунĕпех хаяр çапăçусем пынă, çав çапăçусем уйрăмах союзниксем шалалла кĕрсе кайнă вырăнтан хĕвеланăçнерехри кĕтесре вăйлă пулса иртнĕ. Кăнтăрла иртсен тăшман çĕнĕрен темиçе контратака тунă. Вăл пирĕн савăла тĕпĕнчен татса илме хăтланнă, анчах та унăн контратакисем усăсăр пĕтсе ларнă. Пĕрре тăшман пирĕн позицисем ăшне савăлланса кĕнĕ, анчах та нимĕçсен çав вăхăтлăх çитĕнĕвне пирĕн чаçсем хăюллăн çапăçса пĕтерсе лартнă, тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен йывăр çухатусем кӳнĕ.

Вăйлă атака тума пĕр çĕре пухăннă тăшман чаçĕсене союзниксен артиллерийĕ хыттăн персе сапаласа янă. Тăшман çарĕсем хăйсен йышлă мар танкĕсем пулăшнипе тунă атакăсем нимĕçсемшĕн питех те хакла ларнă. Сахалтан та тăшманăн 40 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Официально йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, десант антарнăранпа нимĕçсенне 40 пин çынна ытла тыткăна илнĕ. Çурçĕртен пуçласа паянхи кăнтăрлаччен сывлăшра çапăçусем пулман, союзниксен авиацийĕ союзниксен çарĕсем йышăннă района хуралласа тăнă».

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Италире союзниксен çарĕсем тăшмана сывлăш çавăрса илме те памаççĕ, пĕтĕм фронт талккăшĕпех каялла чактараççĕ.

5-мĕш армин чаçĕсем Чечина хули çывăхĕнчи ялсене кĕнĕ, тăшмана Чечина шывĕнчен (Тирренски тинĕсе юхса кĕрет) çурçĕрелле сирсе янă. Союзниксен çарĕсем халĕ Сиена хулинчен мĕнпурĕ те 10 километр кăна кăнтăртарахра тăраççĕ. 8-мĕш армин чаçĕсем, тăшман хытă хирĕç тăрать пулин те, Тразимен кӳллинчен хĕвелтухăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре самаях малалла куçнă. Адриатика тинĕсĕ хĕрринчи секторта тăшман Киенти шывĕнчен каялла чакнă, союзниксен çарĕсем çак шыв урлă чылай участоксенче каçса кайнă.

Йывăр бомбардировщиксен соединенийĕсем ĕнер тăшманăн Венгрири çулйĕрĕсене тата Югославири аэродромĕсемпе пĕр порта тапăннă. Авиацин ытти соединенийĕсем тăшманăн Италири вăрçă объекчĕсем çине тата тăшманăн Югославири суднисемпе çулйĕрĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, июлĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем Чечина шывĕ урлă анлă фронтра каçнă та çурçĕрелле наступлени туса пыраççĕ, Чечина хулинчен иртсе кайнă. Союзниксен çарĕсем Сиенăран хĕвеланăçнелле çĕнĕрен малалла куçнă. Акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем тăшмана Тразимен кӳлли районĕнчен çурçĕр-хĕвеланăçнелле тата хĕвеланăçнелле хĕссе пыраççĕ, Торрито ди Сиена пунктне, çавăн пекех тата Перуджа хулинчен 6 миля çурçĕртерехре ларакан Монте Тезьо пунктне тата Вальфабрика пунктне (Перуджа хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре) туртса илнĕ.

Фронтăн Адриатика тинĕсĕ хĕрринчи секторĕнче союзниксен çарĕсем нумай пунктсенче Потенца шывĕ урлă каçнă та Мачератапа Реканати пункчĕсене туртса илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ пĕтĕм Çурçĕр Италири чугун çулсене пыра-пыра çапнă, çавăн пекех тата тăшманăн çапăçусем пыракан районри çулĕсене, автомобиль транспортне тата артиллери позицийĕсене тапăннă. Истребительсен соединенийĕсем Югославире автомобиль транспорчĕпе чугун çул транспортне тапăннă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ВЕНГРИРИ ТАТА ЮГОСЛАВИРИ ВĂРÇА ОБЪЕКЧĔСЕНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, июлĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çумĕнчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: союзниксен йывăр бомбардировщикĕсен пысăк вăйĕсем паян Будапешт çывăхĕнчи, çавăн пекех Венгрири ытти тĕрлĕ пунктсенчи тата Югославири нефть хăвалакан заводсем, чугун çул станцийĕсем тата аэродромсемпе промышленность объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ХĔВЕЛАНĂÇ ГЕРМАНИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, июлĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 2-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем хĕвеланăç Германири объектсене тапăннă.

Копенгаген хулинче пĕтĕмĕшлĕ забастовка пырать

ЛОНДОН, июлĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Копенгагенри пĕтĕмĕшлĕ забастовка çаплах чарăнман. Магазинсем пурте хупă тăраççĕ. Ирхинтен пуçласа урамсенче нимĕç полицейскийĕсем ларса тулнă автомобильсем хуралта çӳреççĕ. Юлашки висĕ кун хушшинче 100 датчана яхăн амантнă.

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Датчансен Стокгольмри информаци агентстви çапла пĕлтерет: Копенгагенра хĕçпăшалланнă датчан патриочĕсемпе нимĕç çарĕсем хушшинче çапăçусем пыраççĕ. Нимĕçсем хулари баррикадăсем çине самолетсем çинчен пулеметсемпе пенĕ тесе пĕлтереççĕ. Швецие Данирен тухса тарнă беженецсем нумай пыраççĕ, вĕсем пулăçăсен киммисем çине ларса каçаççĕ. Çав тарса каçнă çынсенчен нумайĕшĕсем аманнăскерсем. Беженецсем каланă тăрăх, нимĕçсем Копенгагенра датчансемпе çапăçнă чухне хăй тĕллĕн çӳрекен артиллерипе усă курнă. Гитлеровецсем Копенгагенран тухакан пур çулсене те пӳлсе лартнă. Çапла майпа вĕсем хулари халăха тухса тарма чарса лартасшăн. Копенгагена Данин ытти хулисенчен нимĕç çарĕсене васкасах куçараççĕ. Швеципе Дани хушшинче çӳрекен паром паллă мар вăхăтлăха çӳреме чарăнса ларнă.

Хĕрлĕ Çар наступлени туса пыни çинчен Англипе Америка хаçачĕсем мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, июлĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Англири пур хаçатсем те Хĕрлĕ Çар чаçĕсем çĕнтерӳллĕн малалла тапăнса пыни çинчен калакан хыпарсене çаплах шултăра заголовоксемпе пичетлесе пыраççĕ.

«Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçатăн вăрçă ĕçĕсене пăхса тăраканĕ çапла çырать: Германи çарĕ пысăк çухатусем тӳсни тата совет çарĕсем çав тери хăвăрт малалла куçса пыни Хĕрлĕ Çар Германи фронтне татса пăрахнине кăтартса парать. Германин Белоруссири фрончĕ эпир çак вăрçăра халиччен нихăçан курман пек ишĕлсе анчĕ.

«Йоркшир пост» хаçатăн редакцирен çырнă статьинче çапла каланă: совет командирĕсем хăйсен наступленийĕ ăнăçлă пулассине шанса тăнине тӳрре кăларма эрперен те сахал вăхăт кирлĕ пулчĕ. Нимĕçсен аллинчи маневрсем тума кирлĕ территори кунран-кун хĕсĕнсе пырать. Совет командирĕсен мастерлăхне, Хĕрлĕ Çар боецĕсен хастарлăхĕпе паттăрлăхне, пĕтĕм совет халăхĕн иксĕлми вăй-хăватне курса тăнипе Англи пĕтĕм чун-чĕререн хĕпĕртесе савăнать.

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Америка хаçачĕсем Хĕрлĕ Çар çав тери хăвăрт наступлени туса пынипе тĕлĕнсе савăнни çинчен çыраççĕ.

«Нью-Йорк таймс» хаçат çапла шутлать: гитлерла пуçлăхсем темĕн чухлĕ вăй хурса тăрмашаççĕ пулин те, Германи умĕнче халĕ ĕнтĕ 1918 çулхи инкек сăнарĕ тăрать. Анчах, тесе палăртать хаçат, çĕнтерӳ тăвас тесен, союзниксенчен кашнин пĕтĕм вăя хумалла, союзниксем умĕнче халĕ историри чи йывăр çапăçусем тăраççĕ-ха.

«Вашингтон пост» хаçатăн обозревателĕ Новер каланă тăрăх, Хĕрлĕ Çар çав тери хăвăрт наступлени туса пыни питех те тĕлĕнмелле ĕç пулса тăрать. Германин хальхи лару-тăрăвĕ 1918 çулхи çулла пулнă лару-тăруран нумай хут йывăртарах, мĕншĕн тесен Германи çав тери пысăк çухатусем тӳсрĕ, унăн территорине вара союзниксем сывлăшран хăватлăн тапăнса тăраççĕ. Германи çапах та вăйлă-ха, анчах вăл эпир кĕтнинчен хăвăртрах арканса кайма пултарать.

Небраска штатĕнчи Омах хулинче тухакан «Уорлд геральд» хаçат: — Хĕрлĕ Çарăн наступленийĕ, çавăн пекех тата акăлчансемпе американецсен операцийĕсем — Гитлер пĕтсе ларассин пуçламĕшĕ пулса тăраççĕ,—тесе çырать.

ПĔРЛЕШӲЛЛĔ НАЦИСЕН ВАЛЮТĂПА ФИНАНС КОНФЕРЕНЦИЙĔ УÇĂЛНĂ

БРЕТТОН ВУДС, июлĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). США-н Нью-Гемпшир штатĕнчи Бреттон Вудс хулинче паян пĕрлешӳллĕ нацисен валютăпа финанс конференцийĕ уçăлнă. Конференцире пĕрлешӳллĕ çĕршывсен тата вĕсемпе пĕтĕçнĕ çĕршывсен— пĕтĕмпе 45 çĕршывăн делегачĕсем пухăннă. Совет Союзĕн делегацине СССР Тулашри Суту-илӳ Халăх Комиссарĕн заместителĕ Степанов ертсе пырать, США делегацине — финанс министрĕ Моргентау, пĕрлешӳллĕ королевствăн делегацине — Кейнс, Китай делегацине — финанс министрĕ Кун Сян-си, Канада делегацине — финанс министрĕ Лесли, Чехословаки делегацине — финанс министрĕ Фейерабенд, Бельги делегацине — финанс министрĕ Гутт ертсе пыраççĕ. Конференцире Рузвельт конференци делегачĕсем патне янă послание вуласа панă. Кун хыççăн конференци США финанс министрне Моргентауна хăйĕн председателĕ пулма суйланă. Моргентау сăмах каланă. Вăл çав сăмахра тĕнчери экономика проблемисене çак конференцире татса панă чухне нацисем пĕр-пĕринпе килĕшсе ĕçлени кирлине кăтартса панă.

США-па ФИНЛЯНДИ ХУШШИНЧИ ÇЫХĂНУСЕНЕ ТАТНĂ ХЫÇÇĂН

ВАШИНГТОН, июлĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). США финанс министерстви çапла пĕлтернĕ: тăшманпа суту-илӳ тумалла марри çинчен калакан правилăсем тăрăх Финлянди территорине тăшман территорийĕ вырăнне хунă. Çавăнпа та вара Финлянди правительствипе, унăн дипломати представителĕсемпе тата Финляндире пурăнакан çынсемпе финанс е коммерци тĕлĕшпе çыхăну тытма е ĕçсем тума пĕтĕмпех чарса лартнă.

РЕЙТЕР АГЕНТСТВИ НИМĔÇСЕМ АЛАНД УТРАВĔСЕНЕ ОККУПАЦИЛЕНИ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, июлĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Стокгольмри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: лайăх пĕлсе тăракан вырăнсенчен илнĕ хыпарсем тăрăх, нимĕçсем Аланд утравĕсене оккупациленĕ. Стокгольмра çак хыпара çирĕплетекен пĕлтерĕве официальнăй йĕркепе те, урăх майпа та илни пулман-ха.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Полиграфи промышленноçĕн подсобнăй хуçалăхне бригадирсем, полеводсем-овощеводсем, подсобнăй рабочисем кирлĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Дом печати, 2 этаж, ком. 3.

Чăваш АССР-ĕн прокуратурине бухгалтер-ревизор, машинистка тата конюх-рабочий кирлĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Красная площадь, 26, ком. 39. Тел. 7—67.

Шупашкарти пир-авăр фабрикине ялан ĕçлеме çакăн пек рабочисем кирлĕ: 1) каскалакансем, малярсем, штукатурсем, подсобнăй рабочисем; 2) вĕренекен ткачсем, банкоброшницăсем, валенниксем, 3) бухгалтерсем, завхоз-комендант, склад заведующийĕ тата охранниксем. Общежитие вырăнаçтараççĕ, столовăйра апатлантараççĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Володарского, Дом печати, II этаж, отдел кадров Хлопчато-бумажной фабрики.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн подсобнăй хуçалăхне главнăй бухгалтер тата агроном кирлĕ. Хваттер параççĕ тата апатлантараççĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: с. Ильинка, Сундырского района, Чуваш. АССР.

Чăвашсен ялхуçалăх институчĕ çумĕнче çав института вĕренме кĕме хатĕрлекен курс уçăлать. Курса вăтам шкултан вĕренсе тухнă çынсене илеççĕ. Унта уйăх çурă вĕренмелле. Июлĕн 15-мĕшĕнче вĕрентме тытăнаççĕ. Заявленисене документсемпе пĕрле çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, ул. Волгостроя, 4, Сельхозинститут.

Завода çакăн пек работниксем кирлĕ: технологсем, ОРС валли главнăй бухгалтер, секретарь-машинисткăсем, шутпа контора работникĕсем, кладовщиксем тата çакăн пек рабочисем: токарьсем, фрезеровщиксем, револьверщиксем, слесарьсем, гальваниксем, волочильщиксем, штамповщиксем, электромонтерсем, контролерсем, строительнăй рабочисем, уборщицăсем, подсобнăй рабочисем тата курьерсем.
Вахтерсем (охранниксем), арçынсемпе хĕрарăмсем, тата пушартан сыхлакан работниксем кирлĕ. Хваттер параççĕ.
Заводăн транспорт цехне çакăн пек работниксем кирлĕ: рулевой е моторист-рулевой, моторсем, поездсем пухса хатĕрлекенсем, сцепщиксем, стрелочниксем, шоферсем, мотовозсене, вагонсене пăхакансем, çул рабочийĕсем, грузчиксем тата возчиксем. Общежити параççĕ.
Çавăн пекех тата урăх квалификацие вĕренес текенсене (14 çула çитнĕ е унтан иртнĕ çынсене) илеççĕ.
Çак адреспа ыйтмалла: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 80. Бюро пропусков. Куллен 11 сехетрен пуçласа 3 сехетчен ыйтма юрать.

Сăкăр пĕçерекен треста инженер-механик, планевик, нормировщик тата бухгалтер-ревизор кирлĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, ул. Калинина, 6-а.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР
паянтан, июлĕн 4-мĕшĕнчен, пуçласа кунсеренех
«БАГДАДСКИЙ ВОР»
ятлă илемлĕ çĕнĕ фильм кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.
Билетсене ирхине 10 сехетрен пуçласа сутаççĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Кинофикаци управленине ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: эксплоатаци отделĕн начальникĕ, технически отделăн начальникĕ, кадрсен отделĕн начальникĕ, главнăй бухгалтер заместителĕ, бухгалтер-ревизор тата диспетчер.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Дом Советов, ком. 317.
2—2

Госбанкăн Чăваш республикинчи конторине шут ĕçне пĕлекен тĕрлĕ квалификациллĕ работниксем ялан ĕçлеме те, вăхăтлăха ĕçлеме те кирлĕ. Кунсăр пуçне шут ĕçне пĕчченшерĕн вĕренме учениксене йышăнаççĕ. Икĕ уйăх вĕренмелле. Ĕç укçи 250 тенкĕ. Столовăй пур.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Чувашская Контора Госбанка, отдел кадров.

Шупашкарти эрех комбинатне уполномоченнăйсем тата районсенче сад çимĕçĕсемпе çырласем хатĕрлекен агентсем кирлĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Коммунальная Слобода, 21. Телефон 1—73.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00237. Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.